Обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем

# Ферма ĕçчене саватăп чĕререн

Хамăн ĕç пурнăçне пĕтĕмпех ял хуçалăхĕнче ирттернĕрен çакăнти лару-тăру мана паян та интереслентерсех тăрать. Унпа паллашма мана район хаçачĕ



тата хам паллана ертӳçĕсемпе телефонпа калаçса тăни пулăшать. Муркаш районĕ 20-30 çул каяллахи пекех хăйĕн ятне республикăра çӳллĕ шайра тытни район ĕçченĕсене савăнтарни пирки иккĕленместĕп. Тăван ен аталанăвĕшĕн савăнăç пулмасан вĕсем çакăн пек хавхаланупа ĕçленĕ пулĕччĕç-и? Акă, ферма ĕçченĕсен иртнĕ çулхи кăтартăвĕнчен “Ударник”, “Свобода”, “Оринино”, “Герой”, “Лидер”, “Восток”, Суворов яч.хис., Ильич яч. хис., Ленин яч. хис. хуçалăхсенчи обществăлла выльăх пăхакансем район аталанăвне пысăк тӳпе хывни курăнать. Тавах вĕсене аслă ăрусен ĕçне сыхласа хăварса шанчăклăн малалла аталантарнăшăн. Вĕсенчен кашниех сăвва, юрра, пысăк романсене тивĕç. Хамăн паянхи сăвă йĕркисене эпĕ “Свобода” хуçалăхри ферма ĕçченĕсене юратса шăрçаларăм.

Районта 36 çул пĕр уйрăлмасăр обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекен пур-и, тесе ыйтсан, ума “Свобода” хуçалăхри Нина Пименовна Федорова **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕк)** ĕне сăвакан сăнĕ тухать. Фермăна 8 класс вĕренсе пĕтернĕ хыççăн килнĕскер, 7 çул Кашмашри ĕне ферминче ĕçленĕ хыççăн 1979 çултанпа Çатракассинчи ĕне ферминче. “Малтан аппана пулăшма çӳресех ферма ĕçне юратма пуçларăм, Кашмашри 8 çул вĕренмелли шкул хыççăн хамăн ĕç ĕмĕрне фермăпа çыхăнтартăм. Виçĕ ача çуратсан та килте ача пăхса виçĕ уйăхран ытла ларман”, – терĕ ферма ĕçне чунĕпе парăннă Нина Пименовна.



Ăратлă выльăх ĕрчетекен “Свобода” хуçалăх-заводăн Кашмашри сĕт ферминче пĕрремĕш çул мар ĕне сунă çĕрте ĕçлекен Елена Алексеевна Кириллова иртнĕ çул районта пĕр ĕне пуçне сĕт сăвассипе пысăк ӳсĕм турĕ, районта пуринчен ытларах сĕт сурĕ: 5510 килограмм! Çак ӳсĕмлĕ ĕçшĕн вăл район администрацийĕн дипломне тата ЧР Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тивĕçрĕ **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов Е.Кириллована чыслană самант)**.

1984 çулта çемье çавăрнă Татьяна Михайловнапа Юрий Анатольевич Петровскийсем **(виççĕмĕш сăн ӳкерчĕк)** хăйсен ĕç ĕмĕрне Кашмашри ĕне фермипе çыхăнтарнă. Çамрăк чух фермăри сĕт оборудованийĕн слесарĕ пулнă Юрий Анатольевич юлашки 10 çулта 22 çынран тăракан ферма коллективне ертсе пырать. Фермăра паян пурĕ 280 пуç ĕне выльăх. Вĕсенчен 107 пуç сумалли ĕнесем. Хуçалăхĕпе 100 ĕне пуçне 84 пăру илнĕ пулсан, Кашмашри ĕне ферминчи кăтарту – 85 пăру. Кунти 5 дояркăран 4-шĕ иртнĕ çул ĕне пуçне 5 пин килограмм ытла сĕт сунинче те ферма етӳçин тӳпи çук мар. 5 пинлисем хушшинче Татьяна Михайловна та. 29 çул дояркăра ĕçлекенскер, яланах районти ĕне сăвакансемшĕн тĕслĕх пулнă, пур, пулĕ те.

Камсем ĕçлеç фермăра  
Выльăх-чĕрлĕх патĕнче?  
Çитĕнтер-ха пăрава –  
Сăваплă ĕç вăл çĕр çинче.  
Ирпе ĕçе пырсассăн,  
Малтан тислĕк кăларaç.  
Сарайсене тасатсан,  
Апат пама тытăнаç.  
Вăйлă пулсан колхозсем  
Тăван çĕршыв вăйланать.  
Çитĕнтерме, вĕрентме  
Çамрăксене çул пулать.  
Фермăра юрлаççĕ юрă  
Канма ларнă вăхăтра.  
Артистсен пуль, тетĕн, хорĕ,  
Илтсессĕн тикĕс юрра.  
Çатракасси ферминче  
Ĕрчетеççĕ сыснасем.  
Хаклă хакпа, тупăшпа  
Каяç çитĕнсен вĕсем.  
Суриковсен килĕнчен,  
Геннадийпе Лариса,  
Иккĕш пĕрле тĕттĕмччен  
Вăй хураççĕ тăрăшса.  
Çирĕм пилĕк çул ытла  
Алла-аллăн тытăнса  
Утаç вĕсем ĕçелле  
Хĕвелпе пĕрле тăрса.  
Тăват ача ӳстерсе



Ларман килте юрласа.  
Ĕçрен юлман пăрăнса,  
Халăхпа ялан пулса.  
Суйлав çитсен пĕринче  
РСФСР шайĕнче  
Депутата суйлама  
Тăратаççĕ Ларисса.  
Ферма пысăк – ĕç нумай,  
Пĕччен ĕлкĕрме ай-ай.  
Çакна ăнланса пĕрмай  
С. Кронид тимлет чылай.  
Вальăпала Владикăн  
Виçĕ ача çитĕнеç.  
Валя пăхать амасем,  
Чылай илет çурасем.  
Икĕ ферма колхозăн,  
Иккĕшĕ те ăратлă.  
Сысна хакĕ хаклăран,  
Хуçалăха пайталлă.  
Ачасене пăхнă пек  
Пăхмалла çурасене.  
Уйрăлмашкăн вăхăт çук  
Хăнăхиччен амăшне.  
Тавах колхоз пуçлăхне,  
Килсе çӳрет ир те каç,  
Ыйтса пĕлет килтине  
Тата ăçта епле ĕç...  
Кирлĕ пулсан пулăшу  
Ан вăтанăр ыйтма, тет.  
Пур пулсассăн вăй-халу  
Малашлăхшăн ĕçле, тет.  
Пурте пĕрле вăй хурсан,  
Вите-сарай пушанмĕ.  
Сĕт те аш сĕтел çинчен  
Нихăçан та таталмĕ.  
Камсем ĕçлеç пуçлăхра  
Ан вăтанăр çӳреме,  
Тăван ене хăпартма  
Кашмашсенчен вĕренме.

**Василий ПАВЛОВ,**  
**ĕç ветеранĕ.**

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Ĕçре ырă ята тивĕçнисем

# Вăрманти йĕркелĕхшĕн тăрăшать

Иван Игнатьев çамрăклах вăрмана юратса ӳснĕ. Çавна шута илсе ăна 1965 çулта Элĕк район территорине кĕрекен 9-мĕш номерлĕ Писĕп обходне лесник ĕçне шанса панă. Шанса панă ĕçре вăл пысăк тимлĕхпе ăнăçлă ĕçлесе пырать. Унăн обходĕнче яланах йĕрке пулнă. Вăрмана сăтăр тăвакансем тупăнсан, вĕсенчен çирĕп ыйтнă.

Хăйĕнчен те çирĕп ыйтнă вăл. Çавăнпах пулĕ кунти обходра çирĕп йĕрке пулнă.

Вăрман хуçалăхĕн маçтăрĕ Семен Николаев çамрăк лесника ăс парса вĕрентсе пынă. Вăрман ĕçĕнче пысăк опыт пухма пулăшнă. Иван Игнатьев 9-мĕш обходра 10 çул хушши ăнăçлă ĕçлесе пырать. Чи малтанах вăрлăх хатĕрлессипе плансене ирттерсе пурнăçлать. Çăка, вĕрене, хурăн, хыр вăррисем, юман йĕкелне пухассипе чи лайăх кăтартусем тăвать.

1975 çулта, лесниксен штатне чакарнă вăхăтра, Иван Игнатьев çак списока лекет. Колхоза таврăнсан тăван колхозра ĕçлет.

1985 çулта Иван Игнатьева тепĕр хут Малиновка лесничествине 8-мĕш номерлĕ обхода лесник пулса ĕçлеме илеççĕ. Кунта вăл ĕçре пухнă опытпа усă курса çирĕп йĕрке тăвать. Йĕркене пăсакансемпе çирĕп кĕрешет. Ку обход лăпкă участок мар, час-часах вăрманта сăтăр тăвакансем тупăнаççĕ. Мĕншĕн тесен 8-мĕш обход тавра вырнаçнă кашни ялтах тĕрлĕрен çын. «Кунта малтанхи çулсенче питĕ йывăрччĕ», – каласа парать Иван Игнатьев. Ĕçлеме тытăнсан çĕнĕ кардон çурчĕ, сарайсем, мунча, хапхасем тунă. Çурт умне решеткеллĕ карта тытса илемлетсе сăрланă. Кордона хирĕç пуш вырăна улмуççисем лартса чĕртнĕ. Иван Игнатьев таса чунлă, кăмăллă, ĕçчен пулнипе, вăрмана чунтан юратса тăнипе палăрса тăрать. Унăн ĕçĕпе Малиновка лесничествин администрацийĕ те кăмăллă.

Иван Игнатьева 60 çул тултарнă ятпа ЧР вăрман хуçалăх министрĕ Хисеп грамоти, хаклă парне парса чыс тунă. Вĕсен килĕнче хаклă парнесемпе Хисеп грамотисем чылайăшĕ упранаççĕ. Лесник хисеплĕ канăва тухсан та килте лармасть, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх вăрманĕсене пăхса тăрас ĕçре тимлет. Вăл тăрăшнипе участоксенче хăрнă йывăççене касса тасатассипе ĕçлесе пыраççĕ.

Хăрнă йывăççенчен ытларах пайне вутă-шанкă хатĕрлесе хуçалăхри ферма ĕçченĕсене валеççе параççĕ. Вăрмансенчи участоксенче таса та тирпейлĕ. Урлă-пирлĕ йывăççем йăваланса выртмаççĕ.

Хăйне çирĕплетсе панă вăрмансене вăл кашни кунах çитсе тĕрĕслет. Касса хатĕрленĕ йывăç е вутă епле упраннине тĕрĕслесе тăрать. Унăн ĕçĕпе хуçалăх правленийĕ кăмăллă. Иван Игнатьева яланах ырăпа асăнаççĕ.

Ульяна тата Иван Игнатьевсем мăшăрланса 3 ача пăхса çитĕнтерчĕç. Виçĕ ывăл пĕри тепринчен маттур. Анатолий Шупашкар хулинче милицире тимлет. 11 хутчен Чечняра пулчĕ, унта та вăл хăйĕн тивĕçне кирлĕ пек пурнăçларĕ.

2-мĕш ывăлĕ Игорь Çĕнĕ Шупашкар хулинче строитель пулса ĕçлет. Кĕçĕнни Гена Шупашкар хулинче троллейбус водителĕнче нумай вăхăт тăрăшать.

Ульянăпа Иван Игнатьевсем 3 ывăл пăхса çитĕнтерсе вĕрентсе тивĕçлĕ çынсем пулччăр тесе нумай вăй хучĕç, вĕсем ашшĕ пекех спортпа туслă: пирус туртмаççĕ, эрех ĕçмеççĕ.

Анатолий – спорт мастерĕ. Малтанхи вăхăтра Москакасси шкулĕнче физкультура учителĕнче ĕçлерĕ. Унтан ăна Шупашкара ĕçлеме куçарчĕç.

Çакăн пек патвар та хастар ывăлсем пăхса çитĕнтернĕ Игнатьевсене пурнăçра иксĕлми телей, çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунас килет.

Ывăлĕсем ашшĕпе амăшне манмаççĕ, килсех çӳреççĕ. Килти ĕçсене тунă çĕрте пулăшаççĕ. Çуллахи вăхăтра мăнукĕсем те килсе пурăнаççĕ. Ялта ватăсем вĕсемпе савăнса йăпанаççĕ, мăнукĕсене те ыррине кăна вĕрентеççĕ. Пурнăçра вĕсем тивĕçлипех ырă ĕçсем тунă, çавăншăн вĕсем тава тивĕçлĕ çынсем.

**Павел ИВАНОВСКИЙ.**  
Кĕртекасси ялĕ.

01 Зонăри смотр-конкурсра 01

# Кунта чун вăйĕ малта пултăр



Алексей Иванов.

Апрелĕн 12-мĕшĕнче районти Культура çурчĕ умне ирхи 10 сехет тĕлнех халăх пуçтарăнма пуçларĕ. Çынсемпе пĕрлех пĕрин хыççăн тепри пушар хуралĕн ĕçченĕсемпе тулнă çăмăл автомашинăсем çитсе чарăнчĕç. Паян Муркашра Чăваш Республикин çурçĕр зонинчи пушар хурал ĕçченĕсен художествăлла пултарулăх смотр-конкурсĕ иртмелле. Куракансен те вут-çулăмпа кĕрешекенсен мирлĕ тапхăрти сцена çинчи пултарулăхĕпе паллашма май пур. Маларах иртсех калам, кашниех маттур, ĕçри пекех пĕри тепринчен сатур.

...Кунта чун вăйĕ малта тăтăр,  
Вĕçне çитиччен эс кĕреш!  
Вăю хушăнса санăн пытăр,  
Пурнăç каять тусан йăнăш,–

хăй кĕвĕленĕ юрра гитарăпа шăрантарать Алексей Иванов пушарнăй.

Йывăрлăхра çулăма куçран пăхакан, инкек тӳсекене пурпĕр çăлакан яшсем сцена çинче пĕри тепринпе улшăнаççĕ. Кашнин юрри пурнăç илемĕ пирки. “Çурхи вăрманта сар кайăк юрлать...”, “В добрый путь тебя, сынок...”, “Ман юрлас килет, савăнас килет...”, “Нас с тобой преследует сирена...”, “У нас с тобой серьезная работа...”, “Вступает в бой отважный караул...”, “Не забывай, что ты пожарный. И жизни, и судьбы герой...” т.ыт. те. Кашни йĕркерех пушар хуралĕнче тăракансен шăпи, инкекре çынна алă тăсса пама пултарасси.

– Пушар хуралĕнче службăра тăракансен ĕç йывăрлăхне шута илсе, вĕсен чунĕсене лăпкă лару-тăрура çемçетес тĕллевпе ирттерме пуçларăмăр та çак конкурса хамăр системăра, – терĕ смотр-конкурса пĕтĕмлетсе РФ Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕн воспитанипе психологи ĕç пайĕн аслă психолог-инспекторĕ Александр Швед. Конкурсра вара дуэтсем хушшинче пирĕн пушар чаçĕн пуçлăхĕн çумĕпе унăн мăшăрĕ Алинăпа Александр Куликовсем, автор юррине шăрантарассипе 37-мĕш номерĕ пушар чаçĕнчи Алексей Иванов пушарнăй, “Çамрăк ăстасем” номинацире Муркашри пушар машинин водителĕн В.Григорьевăн хĕр ачи Света, сăвă каласси пе “Пурнăç йĕрĕ” балладăна вуланăшăн Муркашри пушар чаçĕн профилактика инструкторĕ Оксана Ефимова малти вырăнсене тухрĕç. Хорпа юрă юрлассипе Элĕксем палăрчĕç. Çĕнтерӳçĕсене республика шайĕнчи конкурс кĕтет. Ăнăçу пултăр унта та.



Света Григорьева.



Алинăпа Александр Куликовсем.

**А.БЕЛОВ.**

Шкул пурнăçĕ

# Республикăри конкурса хутшăннă

***Тивĕшри вăтам шкулта вĕренекенсем тăваттăмĕш хут П.А. Ефимов ертсе пынипе республикăри ачасемпе çамрăксен пултарулăх “Эткер” çурчĕ ирттерекен “Кайăксен кунĕ” уява хутшăнчĕç. Акă, кăçал та ака уйăхĕн 5-мĕшĕнче “Биотон” экологипе биологи кружок членĕсем Оля Иванова, Маша Александрова, Сарра Романова, Арина Медведева тĕп хулара пулчĕç. Эпĕ конкурса хутшăннă Оля ИВАНОВАРАН интервью илтĕм:***

**– Республикăри кайăксен кунне миçе команда хутшăнчĕ?**

– Кăçалхи уява 14 команда хутшăнчĕ. Конкурса Шупашкарти, Çĕнĕ Шупашкарти, Çĕрпӳ, Елчĕк районĕсенчи вĕренекенсем килнĕ. Муркаш районĕн чысне Тивĕшри вăтам шкулти “Зимородок” команда хӳтĕлерĕ.

**– Конкурс заданийĕсем йывăр пулчĕç-и?**

– Конкурс 5 тапхăрпа иртрĕ. Чи малтанах киле панă ĕçе тĕрĕслерĕç. Иккĕмĕш турта карточкăсемпе ĕçлемелле. Çавăн пекех капитансен конкурсĕ, унтан викторина ыйтăвĕсем çине хуравламалла. Кашни командăн тĕрлĕ кайăксене вĕсен сасси-юрри тăрăх тĕрĕс палăртмалла.

**– Уяв мĕнпе асра юлчĕ?**

– Эпир Шупашкарти “Кăйкăр”, “Карăш” экологипе биологи клубĕн командисемпе ăмăртрăмăр. Вĕсем нумайрах балл пухрĕç, çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç. Эпир 7-мĕш вырăн йышăнтăмăр, пĕрремĕш вырăна тухнă командăна 7 балл выляса ятăмăр.

**– Эсир хаçат вулакан вĕренекенсене мĕн суннă пулăттăр?**

– Эпĕ ачасене çут çанталăка юратма, чĕрчунсемпе кайăксене сăнама, кĕнекесем ытларах вулама, тĕрлĕ конкурссене хутшăнма сĕнетĕп. Тарăн пĕлӳ, анлă тавракурăм пулсан, хулари вĕренекенсемпе те ăмăртма çăмăл.

**Анжелика ЕФИМОВА,**  
**7 класра вĕренекен.**